23-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
10
ЭРНЕКУН
180(6417) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИНЕ

Центральнăй фронтăн çарĕсем, хăвăрттăн малалла тапăнса пырса, СЕЙМ юханшывĕ урлă каçнă та сентябрĕн 6-мĕшĕнче КОНОТОП хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, паян вара, сентябрĕн 9-мĕшĕнче, икĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем штурмласа БАХМАЧ хулине — паха чугун çул узелне, тăшман çулĕсен центрне тата нимĕçсен Киев енчи оборонин вăйлăн тĕреклетнĕ чи кирлĕ пунктне йышăнса илчĕç.

КОНОТОППА БАХМАЧ хулисемшĕн пынă çапăçусенче ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн, П. М. КОЗЛОВ генерал-майорăн çарĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн РУДЕНКĂН летчикĕсем тата уйрăмăнах ШКРЫЛЕВ генерал-майорăн 132-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЛУКИН полковникăн 143-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ГОЛОСОВ генерал-майорăн 280-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ГУСЕВ генерал-майорăн 70-мĕш гвардейски Глуховски стрелковăй дивизийĕ, ГОРИЩНЫЙ генерал-майорăн 75-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, БУЗЫЛЕВ полковникăн 221-мĕш бомбардировăчнăй авиаци дивизийĕ, ЖЕГАЛ подполковникăн 3-мĕш гвардейски çăмăл артиллери бригади, ШАПОВАЛОВ подполковникăн 56-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ПАВЛОВ майорăн 65-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ палăрнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртас майпа КОНОТОППА БАХМАЧ хулисене ирĕке кăларассишĕн питех те чаплăн çапăçнă соединенисемпе чаçсене çакăн пек ятсем парас:

„Конотопски":
143-мĕш стрелковăй дивизие;
280-мĕш стрелковăй дивизие;
65-мĕш гвардейски минометнăй полка;

„Бахмачски":
75-мĕш гвардейски стрелковăй дивизие;
132-мĕш стрелковăй дивизие;
221-мĕш бомбардировăчнăй авиаци дивизине;
3-мĕш гвардейски çăмăл артиллери бригадине;
56-мĕш гвардейски минометнăй полка,

малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:
143-мĕш Конотопски стрелковăй дивизи;
280-мĕш Конотопски стрелковăй дивизи;
65-мĕш гвардейски Конотопски минометнăй полк;
75-мĕш гвардейски Бахмачски стрелковăй дивизи;
132-мĕш Бахмачски стрелковăй дивизи·
221-мĕш Бахмачски бомбардировăчнăй авиаци дивизийĕ,
3-мĕш гвардейски Бахмачски çăмăл артиллери бригади;
56-мĕш гвардейски Бахмачски минометнăй полк.

70-мĕш гвардейски Глуховски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса иккĕмĕш хут хăйне палăртнăскере, Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 9-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ КОНОТОППА БАХМАЧ хулисене ирĕке кăларнă паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе çĕрçирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Конотоппа Бахмач хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăрăн тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

Донбаса ирĕке кăларакан геройсене чыс та мухтав!

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ татах тепĕр савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ. Кăнтăр тата Кăнтăр-хĕвеланăç фрончĕсен çарĕсем Донец бассейнне—çĕршывăн кăмăкпа промышленноçăн паха районне нимĕçсенчен каялла туртса илсе, хамăрăн тăван çĕршыв аллине тавăрса пачĕç.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Донбаса ирĕке кăларакан çарсене саламласа панă приказа совет ĕçсыннисем тулли кăмăлпа саванса итлерĕç. Радио тăрăх Сталин юлташăн приказне пама пуçласанах, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри рабочисем репродуктор умне пухăнчĕç. Çулпуç приказĕ рабочисене тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарать. Фабрикăри рабочисем мухтавлă Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçленипе саламлаççĕ. Полякова тата Мочалова юлташсен бригадисенчи рабочисем Вера Николаева, Анна Дмитриева, Агрепина Петрова, Мария Михеева юлташсем виçшер норма тултарчĕç. Çамрăк хĕрача Ганина ылташ фабрикăна ĕçлеме килни нумаях пулмасть. Комсомолка Анна Горбунова ăна кĕске вăхăтрах ĕçе вĕрентсе çитерчĕ. Ганина юлташ та паян нормăна 255 процент тултарчĕ. Халĕ вăл Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕме хатĕрленет. Çак кунсенче татах пилĕк çамрăк комсомола кĕчĕç. Вĕсенчен Нюра тата Катя Сергеевасем нормăна 300-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

А. Бутельникова,
ВЛКСМ организацин секретарĕ.

Государствăна тырă парса татрĕç

СОВЕТСКОЕ. Васкасси ялсовенчи пур колхозсем те государствăна тырă памалли обязательствăсене пурнăçларĕç. „Клевер", Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем государствăна аш-какай, сĕт-çу çăмарта памалли обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех парса татрĕç, „Красная Армия" колхоз тырăсене уйхирĕн чи малтан пухса кĕртрĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче ДОНБАСРА пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, Донбасăн область центрне—СТАЛИНО хулине, КРАСНОАРМЕЙСКОЕ хулипе чугун çул узелне, ЯСИНОВАТАЯ хулипе пысăк чугун çул узелне, НОВО-ЭКОНОМИЧЕСКОЕ хулине, АВДЕЕВКА ятлă район центрне, СЕЛИДОВКА ятлă район центрне, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра КĔÇĔН КАМЫШЕВАХА, ЯВЛЕНСКАЯ, ЗОЛОТОЙ КОЛОДЕЗЬ, ВЛАДИМИРОВКА, КРАСНОЕ, ГРИШИНО, НИКОЛАЕВКА, ГРОДОВКА, ЯСИНОВКА, АЛЕКСАНДРО-ГРИГОРЬЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата МЕРЦАЛОВО, ГРОДОВКА, ЖЕЛАННОЕ, ГАЛУШКИНО ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

БАХМАЧ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра Чернигов облаçĕнчи БОРЗНА хулине тата ЯТУДЫ, КОНОШЕВКА, ШАПОВАЛОВКА, СОСНОВКА, ГИРЕВКА, ЧЕРНИЧЕ, БИЖЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене лайăхлатасшăн çапăçнă.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 93 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 118 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Донбасра пирĕн çарсем, ăнăçлăн тапăнса пырса, Донбасс центрне — Сталино хулине, Красноармейское хулипе чугун çул узелне, Ясиноватая хулипе пысăк чугун çул узелне, Ново-Экономическое хулине, Авдеевкăпа Селидовка ятлă район центрĕсене, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăнса илнĕ. Донец бассейнне—Совет çĕршывĕн çĕр кăмрăкĕпе промышленноçăн питĕ паха центрне нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Иртнĕ çĕрле тата ирхине пирĕн çарсем Сталино хули патне пыракан вырăнсенче хаяррăн çапăçнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнă. Совет çарĕсем, ăста маневр туса, Сталиноран çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра питех те хăвăрттăн малалла куçнă, унтан вара хулана штурмласа кĕрсе кайнă. Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче пирĕн боецсем тăшмана аркатса тăкнă та Сталино хулине нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмешпех тасатнă. Пирĕн çарсем трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче тупăсемпе минометсем нумай, боеприпассен тата тĕрлĕрен çар япалисен пысăк склачĕсем пур.

Пирĕн Константиновка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре кĕрешекен çарсем, хăвăрттăн малалла куçса, Красноармейское хули патне пырса тухнă. Тăшман ку рубежра тытăнса тăма хăтланнă, анчах та ăна пирĕн танкистсем аркатса тăкнă та хуларан хăваласа кăларнă. Красноармейское хулинчи аэродромра нимĕçсен 19 самолетне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата тăшманăн çар техникиллĕ темиçе поездне тытса илнĕ.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 25 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене пыра-пыра çапнă. Самолетсем çинчен бомбăсем пăрахса, тупăсемпе тата пăшалсемпе персе, тăшманăн 40 самолетне ытла çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă.

* * *

Бахмач хули енче пирĕн çарсем, тăшмана хĕссе пырса тата унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Чернигов облаçĕнчи район центрне Борзна хулине, йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункта тăшман хаяррăн хӳтĕленĕ. Çав пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă тата 150 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Продовольстви пысăк склачĕсене тата боеприпассем питĕ нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем гитлеровецсен меллĕ позицисенче чарăнса тăма хăтланнă батальонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем çав батальона çавăрса илнĕ те, хăвăрттăн пырса çапса, аркатса тăкнă. Çĕмĕрсе тăкнă гитлеровецсен батальонĕн пĕтĕм хĕçпăшалне тытса илнĕ.

* * *

Брянск хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени боецĕсем Навля хулине йышăнса илнĕ хыççăн, сĕм вăрмансенче кĕрешсе, тăшманăн флангĕсене тата унăн тылне туха-туха, нимĕçсене сулăмлăн пыра-пыра çапнă. Кун каçиччен хи çапăçусенче нимĕçсен 1200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 25 тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Михайловски Хутортан хĕвеланăçнерехри пирĕн çарсем, тăшмана хăваласа пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 6 тупă, 26 пулемет тата героючи складне тытса илнĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тăшман хăйĕн танковăй чаçĕсене контратакăна кĕртсе янă. Хаяр çапăçусенче пирĕн танкистсем тата артиллеристсем нимĕçсен 32 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 9 тупăне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 800 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, тĕреклетнĕ пунктсене йышăнса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем 400 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 7 тупă, 30 пулемет, 2 радиостанци тата япаласен складне тытса илнĕ.

Смоленск енче пирĕн çарсем активлăн çапăçнă. Доротобуж хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕç пехотин пĕр батальонĕ, танксем пулăшнипе, пирĕн унччен кăна питĕ паха высотана йышăнса илнĕ пĕр чаçа хирĕç контратака пуçласа янă. Тăшманăн пехотипе танкĕсене пирĕн противотанковăй артиллерипе пехотинецсем вăйлăн пеме тытăннă. Гитлеровецсем хăйсен 3 танкĕ тата 200 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ хыççăн хăйсен малтанхи позицийĕсем çине каялла чакнă. Ельня хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем темиçе высотана тата меллĕ рубежсене йышăнса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Вăл шутра 6 тупă тата боеприпассен склачĕ пур. Тыткăна илнĕ.

* * *

Пирĕн авиаци Баренц тинĕсĕнче тăшманăн пĕтĕмĕшпе 10.000 тонна водоизмещениллĕ 2 транспортне шыва путарнă, виççĕмĕш транспортне чылаях сиенленĕ. Нимĕç транспорчĕн çав караванне самолетсем йышлăн хӳтĕлесе пынă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 10 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Финн заливĕнче тăшманăн хуралта çӳрекен карапне тата минăй заградительне шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен Лазо ячĕпе тăракан отрядри ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенире пĕр паровоз, танксемпе тупăсем турттарса пыракан 13 платформа тата салтаксемпе офицерсем лартса пыракан 4 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Чугун çулăн çак участокĕнче поездсем çӳресси чарăнса ларнă. Жданов ячĕпе тăракан отрядри партизансем нимĕçсен 3 автомашинине сирпĕнтерсе янă. 20 гитлеровец пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 211-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 317-мĕш полкăн 4-мĕш ротин тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Ганс Розенбаум çапла каласа кăтартнă: «Август уйăхĕн çурринче 317-мĕш полкри офицерсен пухăвĕнче полк командирĕ Флинцер подполковник сăмах тухса каларĕ. Вăл çапла каларĕ: Гитлер приказне илнĕ. Приказ хамăр йышăнса тăракан позицисене тем пулсан та пăрахса хăварма хушмасть, хамăр аларах тытса тăма хушать, терĕ. Флинцер малалла тата çапла каларĕ: Хĕвелтухăçĕнчи фронт ĕлĕкхи пекех татăклă фронт вырăнĕнче чутланса тăрать, терĕ. Малалла

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Итали парăнни

Паян «Правда» хаçатра Итали парăнни çинчен калакан пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Великобританипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Совет Союзĕ ырланă вăрçă условийĕсем тăрăх Итали правительстви хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕр сăмахсăрах парăннă. Союзниксемпе Италин хĕçпăшаллă вăйĕсем хушшинчи вăрçă ĕçĕсем чарăнса ларнă.

Вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан çав событи, чи малтан, Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче геройла кĕрешнипе, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсемпе çыхăнса тăрать. Ăнсăртран мар ĕнтĕ çакă вăл Хĕрлĕ Çар Донец бассейнĕнче тунă чаплă çĕнтерӳпе пĕр вăхăтра килсе тухрĕ.

Хĕрлĕ Çар, хăйне хĕрхенмесĕр геройла кĕрешсе, Гитлерăн вăрçă машинине аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ. Пуриншĕн те паллă, Хĕрлĕ Çар 1942—1943 çулсенче хĕлле наступлени туса пырса, уйрăмах нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче вăрçăсен историйĕнче халиччен пулман чи пысăк поражени кӳрсе, совет воинĕсем тăшмана нимĕнпе те витме çук çухатусем тӳстерчĕç. Гитлерăн çарĕсем хĕллехи кампани вăхăтĕнче, вилнисемпе аманнисене кăна шутласан та, 1.200.000 çын çухатрĕç, 1943 çулхи çуллахи икĕ уйăх хушшинчи çапăçусенче Гитлер çарĕн миллион çурă салтакĕпе офицерĕ стройран тухрĕç.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи çарĕсене кăна мар, Гитлер вассалĕсен—Италин, Венгрин тата Румынин чи лайăх çарĕсене те хаяррăн пыра-пыра çапнă. Итали çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра хăйĕн чи лайăх дивизийĕсене: «Равенна», «Челлере», «Кассерия», «Сфорцеска», «Пасубио», «Торино» тата ытти дивизийĕсене те çухатрĕ. Италин суйласа илнĕ çарĕсенчи 200.000 яхăн çын Совет Союзĕнчи çапăçу хирĕнчен Италие таврăнаймарĕç. Çапла ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра гитлерла Германин чĕрĕ вăйĕпе техникине кăна мар, çавăн пекех тата мĕнпур Германипе Итали коалицийĕн чĕрĕ вăйĕпе техникине те аркатса, пĕтерсе пынă.

Совет Союзĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕн геройла кĕрешĕвĕ мĕнпур вăрçă ĕçĕнче çавăрăну тума май пачĕ. Фашистла лагерь йывăр кризиса кĕрсе ӳкрĕ. Нимĕç çарĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнине пула пирĕн союзниксем Африкăра çĕнтерӳ тума пултарчĕç, çакă вăл Италие тӳрех пырса çапма май туса пачĕ. Союзниксен çарĕсем Сицили утравĕ çине пырса кĕрсен, Итали умне кӳрремĕнех хăрушлăх тухса тăрсан Муссолини Гитлерла Германирен нимĕнле пулăшу та илме пултараймарĕ.

Нимĕçсен тĕп вăйĕсем, вĕсен чи лайăх дивизийĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çыхланса ларчĕç. Гитлерăн Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта хăваласа килнĕ çарĕсене Хĕрлĕ Çар хăвалăн пыра-пыра çапни гитлерла Германин вăрçă машинине хытах хавшатрĕ, вăрă-хурахла тĕнĕл тĕлĕшпе хăйĕн тусĕ пулса тăракан Италие мĕнле те пулин пулăшу парас майсене пĕтерсе ларттрĕ.

Гитлерла Германи 1943 çулта хăй çуллахи вăхăтра наступлени тăвасси çине пысăк шанчăк хывнă. Хĕрлĕ Çар, паттăррăн кĕрешсе, Гитлерăн çуллахи наступлени планĕсене аркатса тăкрĕ те хăй наступлени пуçласа ячĕ. Гитлерла Германие Орелпа Белгород патĕнче пыра-пыра çапни Муссолинине вырăнтан сирпĕнтерсе антарчĕ, фашистла Италире йывăр кризис пуçланчĕ. Хĕрлĕ Çар çуллахи наступленире тунă çĕнтерӳсене пула, Гитлерăн хăйĕн союзникне—Италие ирĕксĕрех инкеклĕ шăпа умне тăратса хăварма лекрĕ.

Итали кĕрсе ӳкнĕ лару-тăрăва пула, Итали çĕршывĕнче шалта пулса тăнă лару-тăрăва пула, Италин малашне гитлерла Германи майлă çапăçма чăннипех те май çук пулса тăчĕ. Бадольо правительстви тулашран, гитлерла Германи енчен, пулăшу илеймерĕ. Çакăнпа пĕрлех Бадольо хăйĕн çĕршывĕнчи шалти пулăшу çине те шанса тăма пултарайман, мĕншĕн тесен Итали халăхĕ Пĕрлешнĕ нацисене хирĕç вăрçма пăрахас кăмăлне пĕр иккĕленмесĕрех палăртрĕ.

Шалти политикăллă лару-тăру çивĕчленсе кайни уйрăмах Муссолини вырăнтан сирпĕннĕ хыççăн палăрчĕ. Çакă вăл, Бадольо правительстви темĕнле мерăсем йышăннă пулин те, пĕрре те çăмăлланмарĕ. Миланра, Туринра тата Италин ытти хулисенче фашизма хирĕçле тата Германине хирĕçле демонстрацисем чарăнмарĕç. Вĕсем—«Нимĕçсене Италирен кăларса сирпĕтмелле!» текен лозунгсемпе пулса пычĕç. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек лару-тăрура Итали, ăна хирĕç союзниксем тивĕçлĕ мерăсем йышăнсан, текех хирĕç тăма пултараймарĕ. Англипе Америка çарĕсем Итали территорийĕ çине пырса кĕрсен, Бадольо правительствипе унăн хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕр сăмахсăрах парăнчĕç.

Гитлерла Германин союзникĕ пулса тăракан Итали стройран тухрĕ. Çапла ĕнтĕ гитлерла коалицине аркатмаллах пырса çапнă. Иккĕленмелли çук, Итали пĕр сăмахсăрах парăнни Гитлерăн Европăри союзникĕсене, халĕ унăн вăрă-хурахла коалицийĕнче тăраканскерсене, питех те шиклентерсе ӳкернĕ. Итали кунçулĕ вĕсемшĕн асăрхаттармалли пример пулса тăрать. Йывăр самант килсе çитсен, вĕсене Гитлер, Италие пăрахнă пекех, инкеке пăрахса хăварĕ. Гитлерла Германи тĕрекне хавшатнă ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче малалла поражени тӳссе пынине пула вăл татах та ытларах хавшаса пырĕ.

Çăмăллăн çаратса пуйма ĕмĕтленсе, гитлерла Германи майлă вăрçа Итали вăрçăран тухса ӳкрĕ. Гитлерла коалици тунă плансем пĕрин хыççăн тепри ишĕлсе пыраççĕ. Италие стройран кăларни гитлерла Германи тĕнчере пĕччен тăрса юлассине татах та ытларах ӳстерет, унăн вăрçăри стратегиллĕ лару-тăрăвне ытларах начарлатать. Хĕрлĕ Çар тунă пысăк çĕнтерӳсем, çавăн пекех тата Англипе Америка çарĕсем тунă çĕнтерӳсем гитлерла Германие вĕлермеллех пырса çапма, хăвăртрах çĕнтерӳ тума пур майсене те туса пачĕç. Итали пĕр сăмахсăр парăнни çав задачăна пурнăçа кĕртессине татах та ытларах çăмăллатать.

Хĕрлĕ Çар Донец бассейнĕнче нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнĕ, пысăк çĕнтерӳ тунипе совет халăхĕ тивĕçлипех мухтанса савăнать. Халĕ пирĕн пĕр тăшмана—гитлерла Германие союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсем енчен татăклăн пырса çапма нихăçанхи пек мар лайăх условисем туса хунă.

Хĕрлĕ Çар Донбасра çĕнĕ çĕнтерӳ туни çинчен пĕлтерни Итали парăнни çинчен пĕлтернипе пĕр вăхăтра килсе тухрĕ. Çав факт вăл çакна кăтартса парать: тăшман халсăрланнă, вăл йывăр кризиса кĕрсе ӳкнĕ, вăл пĕтĕмĕшпех арканса каясси умĕнче тăрать. Тăшмана пĕтерсе тăкса татăклă çĕнтерӳ тăвас кун çывхарса килнине совет халăхĕ çирĕп шанса тăрать.

(«ПРАВДА», сентябрĕн 9-мĕшĕ).

Малти вырăнта — механически цех коллективĕ

Канашри вагонсем юсакан завод коллективне июль уйăхĕнчи ĕçсемшĕн ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссарначĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Завод коллективĕ Хĕрлĕ Ялава алăра хăварассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлет. Деревообделочнăй цехри фронтовик арăмĕ Дудник юлташ кĕске вăхăтрах станокпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ, кашни кунах икшер норма тултарма тытăнчĕ. Хĕрлĕ Çар совет хулисене ирĕке кăларнипе хавхаланса Дудник юлташ кулленех виçшер норма тултарса ĕçлеме пуçларĕ. Слесарь-механик Юшманов юлташ хăйĕн нормине яланах 300 процент ытла тултарать. Столяр Омсюк юлташ яланах ĕçе 20—30 минута маларах пырать. Ĕç вăхăчĕ çитиччен вăл инструментсемпе материалсене хатĕрлесе хурать. Ĕç вăхăчĕпе туллин усă курать. Çапла майпа вăл нормăна 275—350 процент тултарса ĕçлет.

Колеснăй цехра ĕçлекен Котляров юлташ нормăна 345 процент, Г. Спиридонов комсомолец 312 процент тултарать. Цехри паллă стахановец Гурский юлташ тăватă норма тултарса пырать.

Нумай пулмасть заводри цехсен, сменăсен тата бригадăсен социализмлă ăмăртăвĕн август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Цехсем хушшинчи ăмăртура механически цех коллективĕ (начальникĕ Лоянич юлташ) пĕрремĕш вырăна тухнă. Иккĕмĕш вырăнта—тимĕрçсен цехĕ. Бригадăсен ăмăртăвĕнче. Дмитриев юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Золотарев юлташ бригади мала тухнă. Унăн бригадине заводри чи лайăх бригада ятне панă.

Халĕ кунта цехпа цех, сменăпа смена, бригадăпа бригада хушшинче ăмăрту пырать. Ăмăрту тĕллевĕ—сентябрь уйăхĕнче фронтпа çĕршыва продукци ытларах парасси.

В. ВЕСЕЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Вăл пирĕн дивизие Франци çине канма илсе каймалла текен хыпарсене тĕп-пипех пĕтерсе лартма хушрĕ. Вăл çапла каларĕ: нимĕç çарĕсемĕн çакăн пек татăклă кусенче кану çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Пачах урăхла, халĕ эпир окупациленĕ çĕршывсенче тăракан запас чăсĕсенчен пополнени илсе тăратпăр, малалла та илсе тăрапăр, терĕ. Пуху пĕтнĕ чухне иккĕмĕш армин командующийĕн приказне вуласа пачĕç. Приказра çапăçура 6 офицера персе вĕлерни çинчен тата ытти 15 офицера нумай вăхăтлăха тĕрмене хупни çинчен каланăччĕ».

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперации артелĕсен август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Канашри «Авангард» артель (Чăвашпромсоюз системине кĕрет), Матикассинчи «Кожевник» артель (Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрет), Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артель (Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрет), Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Кооператор» артель (Чăвашдревпромсоюз системине кĕрет) мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри «Авангард» артельтех хăварма тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа уйăрса пама йышăннă.

Ăмăртура палăрнă работниксене премилеме Матикассинчи «Кожевник» артеле 10 пин тенкĕ, Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артеле 5 пин тенкĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Кооператор» артеле 5 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Совнарком август уйăхĕнче пĕтĕм продукци тата ширпотреб туса кăларас енĕпе Чăвашпромсоюз системине кĕрекен артельсем—Ишлей районĕнчи «18 партсъезд», Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Стахановец», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Парижская коммуна» тата «Труд», Октябрьски районĕнчи «Большевик», Çĕрпÿ районĕнчи «Перламутр», Шупашкарти «Кожуршряжь», «Кооператор», «Пекарь», Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь», Шăхасан районĕнчи «Стахановец», Улатăрти «Красная Звезда», «Красный Восток»; Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен артельсем — Йĕпреç районĕнчи Абакасинчи, Калинино районĕнчи Ишлейри, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакасинчи, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сармăкасинчи артельсем; Чăвашлеспромсоюз системине кĕрекен артельсем—Ишлей районĕнчи Мамăшри, Шуркасинчи, Шетмĕпуçĕнчи, Октябрьски районĕнчи Вăта Путашри, Шупашкар районĕнчи Чăрăшкасри артельсем; Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен артельсем—Сĕнтĕр районĕнчи Янăмра «20 лет Чувашии», Элĕк районĕнчи Çĕмĕрткассинчи «Ударник», Етĕрне районĕнчи Пушанарти Чкалов ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ĕнел ялĕнчи «Пахарь», Канашри «Швейник», Шупашкарти «Вышивка» тата Вăрмар районĕнчи Осипенко ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Инвалидсен кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ инвалидсен кооперации артелĕсен август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Улатăрти «Союз инвалидов» тата Шупашкарти «Чебторгин» артельсем мала тухнине палăртнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти «Чебторгин» артельтен илсе, Улатăрти «Союз инвалидов» артеле памалла тунă тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

«Чебторгин» артеле ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Совнарком август уйăхĕнче Ишлей районĕнчи «Красный стрелок», Канашри «Красный Воин», Çĕмĕрлери «Партизан», Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» тата Улатăр районĕнчи Кирери Киров ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Канаш районĕнчи уборка вăхăтĕнчи агитациллĕ массăллă ĕç

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ—1943 çулта тырпулсене вăхăтра, ăнăçлăн пухса кĕртни, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли государство планĕсене пурнăçлани нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатас ĕçре партипе совет тата комсомол организацийĕсен, совхозсемпе колхозсен, МТС-сен, колхозниксемпе колхозницăсен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать тесе кăтартса пачĕç. Çак кăтартăва Канаш районĕнчи партипе совет организацисен ертсе пыракан работникĕсем çийĕнчех ăнланса илеймен. Çавăнпа ĕнтĕ унта уборка пуçламăшĕнче çав кăтартусене кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пыман. Канаш районĕ юлса пыракан район шутланнă. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне вăл тырă вырас плана 80,5 процент çеç пурнăçланă пулнă. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе вăл республикăри районсем хушшинче 15-мĕш вырăнта тăнă.

ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком Канаш районĕ юлса пынине çийĕнчех палăртса, район руководителĕсене çавăн çинчен вăхăтра асăрхаттарчĕç. Çакăн хыççăн кăна район руководителĕсем тата партипе совет активĕ колхозсене пулăшас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеме пуçларĕç, колхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕç. Августăн 25-мĕшĕнче районра партактив пухăвне ирттернĕ. Унта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен сÿтсе явнă. Актив пухăвĕ хыççăнах ВКП(б) райкомĕ, ВКП(б) горкомĕпе пĕрле, юлса пыракан колхозсене пулăшма, ялта партиллĕ-массăллă ĕçе организацилеме 25 коммуниста уйăрса янă.

Çав кунсенчех кая юлса пыракан колхозсене ĕç вăйĕ парса пулăшас ыйтупа Канаш хулинчи хуçалăх организаци руководителĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Кун хыççăн хуларан колхозсенче ĕçлеме 300 çынна çити янă. Колхозсене каякансем валли хальхи тапхăрти лару-тăрупа тырпулсене пухса кĕртес задачăсем çинчен доклад туса панă. Кусемсĕр пуçне районри шкул директорĕсемпе учительсен канашлăвне ирттернĕ. Унта 120 çын пулнă, Отечественнăй аслă вăрçăн хальхи тапхăрĕ тата совет учителĕсен задачисем çинчен доклад туса панă. Кун хыççăн учительсем шкул ачисене пучахсем пуçтарнă çĕре организацилерĕç. Сăмахран, Каракăлри пуçламĕш шкулта вĕренекенсем 286 килограмм пучах пухнă. Августăн 29-мĕшĕнче воскресник туса ирттернĕ. Ку кун хуларан тырă вырма 220 çын тухнă.

Уборка вăхăтĕнче районри колхозсенче, уйрăмăнах кая юлса пыракан Чапаев ячĕпе тăракан, «Мотор» тата ытти колхозсенче те «тырпулсене пухса кĕртесси, ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлемелли государство планĕсене тултарасси—колхозсен тата колхозниксен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пичех те кирлĕ задачисенчен пĕри» ятлă темăпа лекцисем ирттернĕ. Кунсăр пуçне агитаторсем бригадăсенче хаçатсем вуласа панă, тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарнă тата фронтсенчи хыпарсене пĕлтерсе тăнă. Вĕсем боевой листоксем, стена хаçачĕсем кăларнă, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăрту организациленĕ. Малта пыракансене—стахановецсене кăтарту хăмисем, боевой листоксемпе стена хаçачĕсем çинче кăтартса панă, кахалсене тăрă шыв çине кăларса питленĕ. ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Осипов юлташ Юнтапари «Коммунар» колхозра колхозниксем хушшинче калаçусем ирттерессине, стена хаçачĕ кăларассине организациленĕ. Хаçатра стахановецсен ĕçĕсене çутатса панипе пĕрлех, М. Николаева кахалланса пурăннине карикатурăпа кăтартса панă. Çав хаçата кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче вуншар колхозниксем вуласа тухнă, кахалсене критикăланă. Тепĕр кун вара вăл колхозра ĕçе тухманнисем пачах та пулман.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе Катекри Киров ячĕпе тăракан колхозра лайăх йĕркеленĕ. Колхозра пурĕ 8 бригада. Бригадăсенче пуринче те агитаторсем пур. Акитколлектив руководителĕ Векшина юлташ, агитаторсем Якимова, Никифорова тата ытти юлташсем колхозниксемпе колхозницăсене тăтăшах партипе правительство постановленийĕсене ăнлантарса параççĕ, Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи хыпарсене пĕлтереççĕ, колхозниксем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Бригадăсенче боевой листоксем, колхозра стена хаçачĕ тухса тăрать. Колхозра кăтарту хăми пур, унта производствăри стахановецсене кĕртеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тата бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту организациленĕ. Колхозницăсем Анна Ивановăпа Анна Николаева юлташсем тырă вырнă чухне пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе кулленхи нормăна 250-шар процент, Мария Афанасьевăпа Елена Семенова икшер норма тултарса пынă. Красноармеец арăмĕ Анастасия Петрова тата Ирина Гаврилова, вĕсен виçĕ-тăватă ача пур пулин те, нормăна 220—250-шар процент тултарса пынă. Вĕсем ирхен пуçласа тĕттĕмчен вăя шеллемесĕр ĕçленĕ. Колхозник Семенов Иван 60 çула çитнĕ пулин те (унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта) капансем тунă çĕрте виçĕ норма тултарса пынă. 62 çулхи Никифор Кондратьев кĕлте турттарнă çĕрте нормăна 150 процент тултарать. Çаксене пула колхоз 610 гектар çинчи тырпула сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, кĕлте кÿрсе капан хывас плана 50 процент, государствăна тырă памалли обязательствăсене 67 процент тултарнă, кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ. Колхоз кăçал кашни гектартан ыраш, тулă тата пăри 20-шер центнер илет. Колхозниксем Куйбышев ячĕпе тăракан колхоза 25 гектар тырă вырса пулăшнă.

Кун пек паха фактсене районри ытти чылай колхозсенче те курма пулать. Акă сăмахран, «Красное пламя» колхоз сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырпулсене вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене пĕтĕмĕшпех акнă, государствăна тырă памалли плана 60 процент тултарнă тата «Мотор» колхоза пулăшу йĕркипе 25 гектар тырă вырса панă.

Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районри 6 колхоз государствăна тырă парса татнă, 10 колхоз тырă парас плана 60—70 процент таран тултарнă.

Анчах тунă ÿсĕмсем лăпланса ларма ирĕк памаççĕ. Чапаев, Куйбышев ячĕсемпе тăракан, «Мотор», «Красная Армия», «Канаш», «1-ое мая» тата ытти хăшпĕр колхозсем халĕ те юлса пыраççĕ-ха. МТС япăх ĕçлет. Унăн комбайнсемпе 1500 гектар тырă вырмалла, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 412 гектар çеç вырнă. МТС хăйĕн планĕсене машинăсене япăх юсанă пирки, тивĕçлĕ йĕркелĕхпе дисциплина пулман пирки, работниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе сÿрĕк йĕркеленĕ пирки тата контроль япăх пулнă пирки ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пыраймасть. Район государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пырать. Çак çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме партипе совет тата комсомол организацийĕсен тимлĕнрех ĕçлес пулать. Халĕ учительсенчен хăшпĕрисем колхозниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе хутшăнмаççĕ, ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ агитаторсемпе вулав çурчĕсене кирлĕ таран пулăшмасть, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмасть. Ку çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Канаш районĕн вырнă тырпулсене капана хывас, авăн çапас ĕçсене вăхăтра вĕçлеме, государствăна тырă октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парса татма кирлĕ условисем çителĕклĕ. Хĕрлĕ Çар паттăррăн наступлени туса пыни, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ совет хулисене ирĕке кăларакан войскăсене саламласа панă приказсем колхозниксемпе колхозницăсене пысăк хавхалану кÿресçĕ. Вăрнарсен патриотла пуçарăвĕпе Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн пуçланнă социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйпа ÿстерсе пырса, тырпулсене пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртер.

И. ИВАНОВ,
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Выигрышлă вкладсен иккĕмĕш вылявĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Шупашкар хулинчи перекет кассисене хунă выигрышлă вкладсен 2-мĕш выляве октябрĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта пулса иртет.

Выигрышлă вкладсен ку выляве туса ирттерме комисси организациленĕ. Комиссире çак юлташсем тăраççĕ: Чăваш АССР финанс халăх комиссарĕн заместителĕ В. В. Таврин (комисси председателĕ), Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисен управленин начальникĕн заместителĕ А. М. Михайлов (комисси председателĕн заместителĕ), членсем — Е. А. Котельников (Чăваш АССР Наркомхозĕнчи комсодран), А. А. Беспалова (Чăваш АССР Наркомфинĕнчи комсодран), Г. Е. Кудрявцев (60-мĕш №-лĕ тĕп перекет кассинчен), В. А. Зиновьева (финбанковски работниксен профсоюзĕн Чăваш обкомĕнчен) тата К. И. Будников (комиссин ответлă секретарĕ).

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇСЕМ СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тырăсем акнă	Кĕрхи çĕртме тумалли 5 кунхи плана пурнăçланă
Канаш	107,3	64,7
Калинино	104,0	19,0
Вăрнар	102,7	5,9
Елчĕк	102,1	51,9
Элĕк	102,0	43,2
Ишлей	102,0	25,9
Красноармейски	102,0	3,1
Шупашкар	101,4	14,1
Çĕрпÿ	101,2	28,1
Шăхасан	101,0	4,3
Сĕнтĕр	100,2	29,3
Вăрмар	100,1	27,9
Советски	100,1	17,0
Етĕрне	100,1	28,3
Шăмăршă	100,0	—
Тăвай	99,8	47,7
Октябрьски	92,7	10,2
Хĕрлĕ Чутай	92,7	6,8
Сĕнтĕрвăрри	89,4	13,0
Куславкка	86,3	—
Чкаловски	85,1	16,0
Çĕмĕрле	85,0	—
Комсомольски	84,0	13,3
Первомайски	83,8	4,3
Йĕпреç	71,7	4,4
Улатăр	66,9	—
Кувакино	63,6	9,3
Пăрачкав	57,9	—
Шупашкар хули	101,2	—
ЧАССР тăрăх	93,3	19,3
Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	75,7	12,1

Кĕракине вĕçленĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Енер районри пур колхозсем те кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Кĕрхи тырăсене кăçал пурĕ 9.442 гектар акнă. Яманак ялсоветĕнчи «Красная Сорма», «Красный Богатырь» колхозсем кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 42 гектар акса хăварчĕç. Нумай колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вăйлăн пулса пырать. Паянхи куна пурĕ 600 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

С. ШАДИН.

Кĕрхи çĕртме тăваççĕ

ЭЛĔК, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсенче кĕраки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пуçланчĕ. Кивĕ Мачăшри «Ударник» колхоз ĕнерпе паян 14 гектар сухаларĕ, Анаткасри Калинин ячĕпе тăракан колхоз 9 гектар, «Надежда» колхоз 17 гектар, Горький ячĕпе тăракан колхоз 20 гектар сухаланă. Районĕпе илсен сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме 391 гектар тунă.

Х. ЛИСИН.

Ольтикасси ялсоветĕнчи колхозсем государствăна тырă парса татрĕç

СЕНТĔРВАРРИ. Ольтикасси ялсовет исполкомĕ (председателĕ Матвеев юлташ) уборка вăхăтĕнче колхозсене аван ертсе пычĕ. Ялсоветне кĕрекен 4 колхозĕ те тырпулсене кĕске срокра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕç. Авăн çапас ĕçе вăхăтра, тĕрĕс организацилерĕç. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пур колхозсем те государствăна тырă памалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Çавăн пекех Ольтикасси ялсоветĕнчи «Восток», «Заря», «Майăн 1-мĕшĕ» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕракине те кĕске срокра, пысăк пахалăхпа туса пĕтерчĕç. Пур колхозсем те кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акрĕç.

А. ВАХНИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Паттăр воинсем валли—ăшă япаласем

КАНАШ. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем мухтавлă воинсем валли ăшă япаласем хатĕрлеме тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе вата колхозницăсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Вĕсем боецсем валли 70 мăшăр çăм чулхасемпе алшишсем çыхаççĕ.

Çавăн пекех Шмидт ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 80 мăшăр çăм чăлхасемпе алшишсем çыхма тытăннă.

И. МАКСИМОВ.

* * *

Советски районра Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлесси сарăлсах пырать.

Чуванкассинчи «Трудовик» колхоз районри склада 28 килограмм çăм пачĕ. Унсăр пуçне колхозницăсем носкисемпе перчеткесем 120 мăшăр çыхса хатĕрлеççĕ. Хучаш ялсоветĕнче 23 килограмм çăм пухнă. Васкасси ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем носкисемпе перчеткесем 30 мăшăр çыхса параççĕ.

М. СТЕПАНОВА.

Совет Союзĕпе Египет пĕр-пĕрин хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнăва пуçласа яни

Юлашки вăхăт хушшинче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ И. М. Майский тата Египетăн Премьер-министрĕ, вăлах Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Мустафа Эль Нахас Паша хăйсен правительстви ячĕпе пĕр-пĕрне пĕлтерÿсем панă. Çав пĕлтерÿсем хыççăн 1943 çулхи августăн 26-мĕшĕнчен пуçласа Совет Союзĕпе Египет пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçланă.

Килĕшсе татăлнă тăрăх, Совет Союзĕпе Египет çак çитес вăхăтрах пĕр-пĕрин патне хăйсен посланникĕсене яраççĕ.

Ют çĕршывсенче

Бадольо тухса калани

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Итальянецсен Стефани агентстви Бадольо маршал паян радио тăрăх тухса каланине пĕлтернĕ. Бадольо хăйĕн заявленийĕнче çапла каланă: Итали правительстви «противникăн пирĕнтен нумай хăватлăрах вăйĕсемпе танмар кĕрешÿре малалла текех çапăçма пултараяс çуккине йышăнса», союзниксен Англипе Америка вăйĕсен главнокомандующийĕнчен Эйзенхауэр генералтан перемири тума ыйтрĕ. Союзниксем эпир ыйтнипе килĕшрĕç. «Çавăнпа та ĕнтĕ,—тенĕ заявленире,— Италин хĕçпăшаллă вăйĕсен Англипе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе вăрçма пур çĕрте те чарăнмалла. Анчах та Италин хĕçпăшаллă вăйĕсем, вĕсене кам та пулин урăххи атакăлас пулсан, хирĕç тăрса çапăçма хатĕр»,—тенĕ.

Кэннингхэм адмирал Итали флочĕ пирки тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян каçхине союзниксен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ Кэннингхэм адмирал радио тăрăх тухса каланă. Вăл çапла каланă: итальянецсен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи карапĕсем халех Гибралтара, Триполине, Мальта утравĕ патне, Хайфăна тата Александрине каймалла. Итальянецсен Хура тинĕс порчĕсенче тăракан карапĕсем вырăссен порчĕсене каймалла. Итальянецсен Эгей тата Хура тинĕссенчи суту-илÿ суднисене, вĕсем нимĕçсен аллине лекме пултарасси палла пулсан, шыва путармалла е юрăхсăра кăлармалла.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИПЕ ФРАНЦИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем ĕнер Германин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи промышленность обьекчĕсене тапăннă.

Мюнхен хули çине бомбăсем уйрăмах нумай тăкнă.

Çавăн пекех тата тăшманăн Францири чылай обьекчĕсене вăйлăн тапăннă.

Тăшманăн истребителĕсемпе зенитнăй артиллерийĕ питĕ хаяррăн хирĕç тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 82 самолетне персе ÿкернĕ. Союзниксен 39 самолет пĕтнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ сентябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Маннгеймпа Людвигсхафена тапăннă чухне çав хуласем çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 1.500 тонна пăрахнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн японецсен тылне аннă парашютисчĕсем, Маркхейм улăхĕпе пырса, Лае тата Саламауа (Çĕнĕ Гвинея) пункчĕсене йĕритаврах çавăрса илме пулăшнă. Çавăрса илнĕ Япони войскисен хисепĕ 20.000 çынна çитет пулмалла. Япони çарĕсене кирлĕ хатĕрсем илсе пымалли çулсене татнă.

Австралин малалла куçнă войскисем американецсен Маркхейм улăхне аннă парашютисчĕсен отрячĕсемпе пĕрлешнĕ.

БРИТАНИ ТРЕД-ЮНИОНĔСЕН ÇУЛСЕРЕН ПУЛСА ИРТЕКЕН 75-МĔШ КОНГРЕСĔ УÇĂЛНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Саутпорт хулинче Британи тред-юнионĕсен çулсерен пулса иртекен 75-мĕш конгресĕ уçăлнă. Конгреса 800 делегата яхăн пухăннă. Вĕсем 230 тред-юнионра тăракан 6 миллион член ячĕпе калаçаççĕ. Конгреса Совет профсоюзĕсен делегацийĕ пынă. Делегацие Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн Секретарĕ Н. М. Шверник юлташ ертсе пырать.

Конгреса çавăн пекех Швеци профсоюзĕсен виçĕ представителĕ тата Америка профсоюзĕсен 2 представителĕ пынă.

Нимĕçсем Болгарие çĕнĕрен хĕсни

СТАМБУЛ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен çапла пĕлтереççĕ: Борис патша вилнĕ май тата унăн çитĕнсе çитмен ывăлĕ Симеон патша вырăнне ларнă май, Болгарире, конституци тăрăх, регентсем суйламашкăн аслă халăх пухăвĕ пухмалла.

Филов правительстви, Болгари халăхĕ увăн политикине хирĕç тăнине шута илсе, хальхи вăхăтра суйлавсем туса ирттерме хăрать. Суйлавсем Болгари правительствин Гитлер майлă политикине хирĕç тăвакан анлă демонстраци пулса тăма пултараççĕ. Çавăнпа та вăл, нимĕçсем канаш панă тăрăх, халь вăрçă вăхăчĕ-ха тесе, çав суйлавсене тепĕр срока хăварма шут тытнă.

Халĕ çакă паллă пулса тăнă: Филов, конституцие хирĕç пырса, регентсене Борис патша вилнĕ пирки пухнă 25-мĕш законодательнăй пухăвăн 6-мĕш сессийĕнче суйлаттарасшăн. Халăх пухăвĕн хальхи составĕ, правительствăн Гитлер майлă политикишĕн тăраканскер, нимĕçсене пĕтĕмпех кăмăла каякан регентсене çирĕплетĕ, тесе шанса тăрать вăл.

Борис патшана сентябрĕн 5-мĕшĕнче пытарнă май халĕ анлă çар канашлăвĕ туса ирттересшĕн. Софие Германин верховнăй командованийĕн представителĕ маршал Кейтель пуçпулса тăракан делегацийĕ пынă. Çав делегаци Филов правительствине çĕнĕ ультиматум панă. Гитлер Болгари çарне пĕтĕмпех нимĕç командованине пăхăнса тăмаллла тума хушать.

Болгари халăхĕ питĕ пăшăрханать. Вăл пĕлет: Гитлер ыйтнине пурнăça кĕртсен, Болгари çĕршывĕ катастрофа патне пырса тухать.

Болгари патриочĕсем татăкла çапăçăва хатĕрленеççĕ. Нимĕçсемпе вĕсен лакейĕсене Болгарирен хăваласа кăларасси халĕ Болгари халăхĕн лозунгĕ пулса тăрать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РСФСР НАРКОМЗДРАВĔН ШУПАШКАРТИ ФАРМАЦЕВТ ШКУЛĔ

1943—44-мĕш вĕренÿ çулĕ умĕн вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.

Шкул провизор помощникĕсене хатĕрлет.

Виçĕ çул вĕренмелле.

Шкула арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ, 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене. Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕрентнинчен кая пĕлмелле мар.

Çаксене экзаменсĕрех илеççĕ: а) 1941, 1942, 1943 çулсенче туллимар вăтам шкулсенчен «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене, б) вăтам шкулсенчен, рабфаксенчен, техникумсенчен, педагогика училищисенчен е ытти специальнăй шкулсенчен вĕренсе тухнисене.

Ыттисене пурне те экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе памалла: вырăс чĕлхи, чăваш чĕлхи, арифметика, СССР Конституцийĕ, хими.

Заявленисене сентябрь уйăхĕн 30-мĕш числиччен илеççĕ.

Заявленисене шкул директорĕ ячĕпе çырмалла. Заявленипе пĕрле çак документсен подлинникĕсене ямалла: вĕренни çинчен калакан свидетельство, хăçан çуралнине пĕлтерекен свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, ялсовечĕ çирĕплетсе панă икĕ фотоÿкерчĕк.

Шкулăн хăйĕн общежити пур, выртса тăма вырăн-мингерсем параççĕ, столовăй пур.

Заявленипе пĕрле е ыйтса пĕлмелле пулсан 60 пуслăх марка ямалла.

Шкулăн адресĕ çапла: гор. Чебоксары, Чувашская ул., 15, Фармацевтическая школа.

2—1

СССР НАРКОМЗАГĔН ЧĂВАШ АССР-ĕнчи УПОЛНОМОЧЕННĂЙĔ управленире ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: инспекторсем, экономистсем, техничка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, комната № 116. Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1117 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.